*Хӑй вӑхӑтӗнче ҫак сӑмаха «Ялавра» пичетлесе кӑларнӑшӑн журнал редакторне хытӑ асӑрхаттарнӑ, ӑхӑртнех, КПСС обкомне поэт чӑваш чӗлхине ҫапла пыска хуни сехӗрлентернӗ пулмалла.*

Хаклӑ юлташсем! Йӑмӑксемпе шӑллӑмсем!

Сирӗн канашлӑвӑр Ҫеҫпӗл 70 ҫул тултарас умӗн иртет. Сиртен чылайӑшӑртан кӗҫӗнтерех, хӑшӑртан, тен, кӑшт кӑна аслӑрах ҫав кӑвар чӗре халӑхӑмӑрӑн чӗрӗлӗхӗшӗн хыпса ҫунса кайрӗ. Чӗрӗлӗх сӑмаха вӑл Революципе пӗр тан пысӑк саспаллипе ҫырнӑ. Наци чӗрӗлӗхӗ уншӑн чи малтан тӑван чӗлхе чӗрӗлӗхӗ пулнӑ, чӗлхе чӗрӗлӗхӗ - наци чӗрӗлӗхӗ. Халӑхӑн ҫӗршер, пиншер ҫулхи асап-тӗсепне каялла ҫаврӑнса пӑхса, ӑша ҫунтаракан сӑмахсемпе иртнине сӑнласа-ӳкерсе, Интернационал кӗперӗ витӗр, ун урлӑ кармашса, вӑл таҫти малтине те яр-уҫҫӑн курса тӑнӑ. «Хулпуҫҫипе кӑвак пӗлӗте перӗнсе» ҫӗкленсе ҫӗнӗ чӑвашӑн чӗлхи тимӗр татасса ӗненнӗ.

Акӑ ӗнтӗ ҫав вилӗмсӗр сӑнарпа - Интернационал кӗперӗпе - вӗҫленекен «Ҫӗн Кун Аки» сӑвва хӗрӗх те пӗр чӗлхене куҫарчӗҫ. Хӗрӗх те пӗр! Чӑвашра ку авалтан асамлӑ хисеп пулнӑ. Ӑрӑмҫӑсем, сутҫанталӑка сӑнакан аслӑ ватӑсем хӗрӗх те пӗр сиплӗ курӑк пӗлнӗ.

Чӑваш чӗлхи тимӗр татрӗ! - теме пултаратпӑр эпир паян. Ҫеҫпӗле куҫаракансем хушшинче пысӑк культурӑллӑ халӑхсен пысӑк поэчӗсем пур. Руставелипе Низами, Пушкинпа Шевченко, Райниспа Донелайтис, Рудакипе Навои, Шафарикпа Мицкевич, Ботевпа Петефи, Тукайпа Хетагуров тата ыттисен чӗлхипе те сасӑ парать паян Ҫеҫпӗл.

Ку сире, ҫамрӑксене, ҫӗнӗ шанчӑк кӳртсе, ӑмӑрт ҫунат хушмалла! Хӑвӑртан малтан йывӑр тертпе ҫул хывнӑ тӑванӑрсене сума сӑвӑр. Пӗрне-пӗри те хисеплӗр, туслӑ пурӑнӑр. Мал ӗмӗт ячӗпе, ӑсталӑх ячӗпе сиксе тавлашӑр, тупӑшӑр, ӑмӑртӑр, ҫухаран ҫавӑрса тытасса ҫитӗр, анчах урӑр ҫӗре лексенех пӗрне-пӗри парӑр. Ан манӑр: эсир пӗр аслӑ самана ҫыннисем, пӗр халӑх йышӗ, пӗр класс сасси. Поэзи хурал пӳрчӗ мар, унта карлат ҫӗнтереймӗн. Ҫеҫпӗл савӑҫсем патне ҫырнӑ ҫырӑвӗсенче «чӑваш чӗлхи ячӗпе пӗр пулар» тет. Ку нумая пӗлтерекен япала. Этем ӗмӗр пурӑнаймасть. Харнӑ йываҫ вырӑнне ҫӗнӗ хунав шӑтать. Пӗр йӑннӑ сасӑ вырӑнне вуннӑ янраса кайтӑрччӗ! Паллах, татӑлнӑ Ҫеҫпӗл пек, Константин Иванов пек талантсене вуншар сӑвӑҫпа та, ҫӗршерпе те саплаштарма ҫук. Тепӗр тесен тата талант тени - яланах хӑйне евӗрлӗ пӗртен-пӗр япала. Мӗн вӑл талант? Атте-аннепе ҫутҫанталӑк панӑ тивлет. «Турӑ хӗлхемӗ» тенӗ

авалхисем. Чăн-чăн пултарулăх çав хĕлхемсĕр пулма пултараймасть. Пĕрне вăл сăвăç е художник, теприне мусăкçă е тухтăр, виççĕмĕшне, калăпăр, философ е тĕпчевçĕ пулма хистет пулĕ. Çав хистеве çын хăйшĕн вăхăтра сиссе илни паха. Ма тесен пирĕн хушăра тепĕр чух хăйсене хăйсем сая яракан графомансем те сахал мар тĕл пулаççĕ.

Истори али питĕ вĕтĕ куçлă: кайран-кайран хывăхĕпе тĕшши палăратех. Анчах вахăтлăха, тĕрлĕ сăлтава пула, ним талантсăр çынсемех кĕнеке хыççăн кĕнеке кăлараççĕ, пĕрне-пĕри мухтаççĕ пуçпа мар - чавсапа ытларах ĕçлеççĕ. Эсир пурте вулакан çыннисем. Тĕллесе кăтартмасăрах палласа илме пултарăр ун йышшисене. Сыхланăр çавăн пек меслетсенчен! Анваскăр! Вĕренĕр. Вулăр, сăнăр, тĕпчĕр, шырăр.

Эсир наци малашлăхĕшĕн сăмах тытмалли çынсем. «Халăхсене вĕсен литературипе виçеççĕ», - тенĕ Виктор Гюго. Чăваша малашне сирĕнпе виçĕç. Сулмаклăрах пусасчĕ сирĕн çав тараса çине! Çеçпĕл хăйĕн саманишĕн, хăйĕн çулне кура, питĕ нумай пĕлнĕ. Вăл, чăвашсăр пуçне, ун чухнехи вырăспа украина литературин пĕтĕм юхăмесене, ушкăнĕсене тĕпчесе, ăнланса илме тăрăшнă. Астăвăр-ха «Шухăшласа кăларнă куçсене» ятлă сăввине. Вырăсла çырнă япала. Хальхи тӳперен пăхсан, ытла вăйлах та мар сăвви. Анчах халаллани шухăша ярать: «Манăн ытараймиимажанизм поэзине». Пĕлнĕ, сананă, тишкернĕ. Вăл юхăм (имажинизм) çапах та паллă вырăн йышăннă ун чух, ун курланкинчен пысак Сергей Есенин шĕкĕлченсе тухнă-çке!

Ĕнер кунта яшсене пăртак ӳпкелесе те илчĕç: чăваш пурнăçĕнчен ытла та инçе пăрăнаççĕ, таçти Нефертити, Пенелопăсем таранах çул тытаççĕ имĕш пирĕн тухьяллă музăсем. Мана хама ку питех шиклентермест. Пирĕн поэзи хальхи нумай енлĕ, кăткăс интеллигенци чĕлхипе те калаçа пуçларĕ. Ку ĕнтĕ тĕнче культурине, этемлĕхĕн ку таранченхи ăс-тăн мулне хамăрлатас сăлтавпа пулса пыракан япала Унсар май та килмест пулĕ. Чăннипех те Интернационал кĕперĕ айне тăнă халăх ытти халăхсен пĕтĕм ăс-тăнне, илемлĕ ăсталăхне хăйĕн тумасăр нихăçан та вĕсемпе танлашаймĕ. Эпĕ тахçанхи шухăшах калатăп. Пирен опера театрĕ «Евгений Онегин», пур ытти классикăри операсене те чăвашла лартмасăр нихăçан та наци театрĕ пулаяс çук.  Хальлĕхе, мăшкăл пулин те, уйрăм арисене е романссене чăвашла юрлани те çук-ха.. Ак кунта та сирĕн, çамрăк поэтсен, ĕçлемелли питĕ нумай. Эстрада пирки те çавнах каламалла.

Тепĕр манăн тахçанхи шухăш: чĕлхе вĕренĕр! Тĕнче поэзине оригиналран куçарас ĕçе хутшăнма хатĕр пулăр. Эпĕ вунă çул ытла пăлхар чĕлхи вĕренетĕп.

Ыр-и, усал-и, хама кура, вăй çитнине куçаркалатăп. Урăх чĕлхе, вĕренме, тен, вăхăтăм та, сывлăхăм та çитеймĕ. Шанчăк - сирте, яш-кĕрĕм, хĕрупраç! Пирĕн умра хамăр халăхăн калама çук пысак уявĕ: эпир астунă çĕнĕ историре пуçласа - пĕрремĕш хут - çĕнĕ, ирĕклĕ патшалăх пулса тăчĕ Чăваш çĕршывĕ. Кун пĕлтерĕшĕ вышкайсăр аслă. Эпир ăна мĕнпур тăванла халăхсемпе мухтавлă уявласа ирттермелле. 50 çул - Ленин пехилĕпе пуçланнă çĕнĕ эрăн улăпла утăмесем пире коммунизмалла илсе пыраççĕ. Хăй тата, чăваш халăхĕн ĕмĕрхи тусĕ, хамăр Атăл тăрăхĕнчи çывăх çын, вĕрентекенĕмĕр, çулпуçăмăр 100 çул тултарать. Çав хаваслă çитес уявсем тĕлне çамрăксенчен çĕне - халиччен пулман - сăвă-юрă, поэмăсем кĕтес килет. Кам мĕне ăста, мĕнле меслет тупать, лара-тăра пĕлмесĕр тене пек, ыйхă татса, Илпек каларĕшле, ĕçлемелле пулĕ - сирĕн те, пирĕн те. Тепре курнăçнă чух савăнмалли те, мухтанмалли те пултăр. Çавна ĕненнипе эпĕ сире юлашкинчен анчахрах çырнă пĕр сăввăма вуласа парам.

## ЭПИР - ЧĂВАШ ÇЫРАВÇИСЕМ

*Л. Ф. Талвире*

Çĕршывăн, нацин, сăвăçсен
Чи пысăк пĕрлехĕ - чĕлхе.
Эпир чăваш челхипелен
Кăкараннă ĕмĕрлĕхе.
Кăкараннă-и? Чăн та-и?
Çапла. Салтма ан шухăшла:
Тăван чĕлхемер - чун туйи,
Вăл систерет - ыр-усала.-
Асаттесен-асаннесен,
Кукаçейсен-кукамайсен
Пиншер çулхи сăмахĕсем
Пире çын турĕç, пиллесе.
«Атте-анне», «Тăван çĕршыв»
Тесе калатпăр чăвашла.
Чĕлхемĕрте чечек шăрши,
Шыв-шур шавлать, вăрман кашлать.
Чечен чĕкеç чĕвĕлтетет,
Савни юрри савăнтарать...
Чĕлхе - тĕлĕнмелле тивлет, -

Тĕнче уççи вăл тыттарать!
Килет тем тĕрлĕ самана -
Шăкăлтататпăр хамăрлах:
Çав «Тав сана!» та «Сав мана!»
Янрать кĕрекере çаплах.
Чăваш чĕлхи эрешĕпе
Витсе чи аслă шухăша,
Эпир тĕнче мехелĕпе
Паллаштаратпăр чăваша.
Эпир - чăваш çыравçиссм,
Ватти, вăталăхĕ, яшши,
Эпир - сăмах шыравçисем,
Сăмахĕ - вилĕмсĕр йышши!
4.1У.69